26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАРТ
6
ШАМАТКУН
52(6289) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла Кунĕ—мартăн 8-мĕшĕ çинчен

ЦК ВКП(б) йышăннă постановлени

Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла Кунне кăçал совет хĕрарăмĕсем гитлерла Германипе унăн тарçисене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн татăклă самантĕнче кĕтсе илеççĕ. Виçĕ уйăх ытла ĕнтĕ пирĕн войскăсем ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсен войскисене аркатса тăкмаллах пыра-пыра çапрĕ тата тăшмана çĕнтерме çирĕп никĕс туса хучĕ. Вуншар хуласене тата нумай пиншер саласемпе ялсене нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă. Тăшмана совет çĕршывĕнчен массăллăн хăваласа кăларас ĕç пуçланчĕ.

Отечественнăй вăрçăра совет хĕрарăмĕ фашистла нимĕç ирсĕрĕсене хирĕç активлă кĕрешекенсен ретĕнче тăрать. Халĕ, пирĕн халăхăн ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçинче, хамăрăн Тăван çĕршыва хӳтĕлессишĕн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешнĕ пек, хĕрарăм пĕтĕм иртнĕ историре нихăçан та кĕрешмен-ха.

Совет хĕрарăмĕн хӳтĕлемеллисем пур!

Совет влаçĕ ĕççынни хĕрарăмне пурнăçăн пур облаçĕсенче те чăнчăн тулли пĕртанлăх пачĕ. Вăл хĕрарăмсене государствăна тытса пырас ĕçе явăçтарчĕ, ирĕклĕн те пуçаруллăн ĕçлеме тата телейлĕ амăшĕ пулма пур условисене те туса пачĕ.

Нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахĕсем пирĕн халăхăн пурнăçне, ирĕклĕхне тата никама пăхăнманлăхне, ĕççынни хĕрарăмĕсен историллĕ çĕнтерĕвĕсене хăрушлăх умне кăларса тăратрĕç. Вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче гитлеровецсем нихăçан пулман пек ирсĕр ĕçсем тăваççĕ, мирлĕ халăха вĕлерсе пĕтереççĕ, хĕрарăмсемпе хĕрачасенчен мăшкăлаççĕ, ачасене асаплантарса вĕлереççĕ. Çĕршер пин совет хĕрарăмĕсене фашистла пусмăрçăсем Германие каторгăри йывăр ĕçе тума хăваласа кайнă.

Пирĕн çĕршыври ĕççынни хĕрарăмĕсем нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем çине хаяррăн тарăхаççĕ тата вĕсене пĕтĕм чĕререн курайманççĕ. Пĕтĕм халăхпа пĕрле вĕсем хăйсен тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тискер тăшманран хӳтĕлесе хăварма çĕкленчĕç. Тылра тата фронтра совет патриоткисем паттăррăн тата тăван çĕршыва, большевиксен партине, Сталин юлташа вĕçĕ-хĕррисĕр парăнса тăнин чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче хĕрарăмсен обществăллă производствăри вырăнĕ калама çук ӳсрĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче ĕçлекен миллионшар хĕрарăмсем, вăя шеллемесĕр ĕçлесе, фронта хĕçпăшалсем, боеприпассем тата апат-çимĕç пĕр чарăнусăр парса тăраççĕ. Çĕршер пин хĕрарăмсем заводсене, фабрикăсене, учрежденисене ертсе пыраççĕ. Çĕршер пин хĕрарăмсемпе хĕрсем, кăткăс профессисене вĕренсе çитсе, фронта кайнă арçынсем вырăнне ĕçлеме тăчĕç. Ялхуçалăхĕнче хĕрарăмăн вырăнĕ уйрăмăнах ӳсрĕ. Халĕ колхоз производствин тĕп йывăрлăхĕ колхозницăсен çурăмĕ çине ӳкрĕ. Вуншар пин хĕрарăмсем колхозсене ертсе пыраççĕ, бригадирсем, звеньевойсем, выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсем, агрономсем пулса ĕçлеççĕ.

Совет хĕрарăмĕсемпе хĕрĕсем мухтавлă Хĕрлĕ Çар ретĕнче тата партизансен отрячĕсенче нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ, санитаркăсен медсестрасен, врачсен, связисткăсен, снайперсен ĕçне, сывлăшран тапăннине хирĕç хӳтĕлекен чаçсенчи ĕçе чыслăн туса пыраççĕ. Командованин заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн советăн мухтавлă хĕрарăмĕсене нумайăшне Совет Союз Геройĕн хисеплĕ ятне панă. Ирĕклĕхшĕн пыракан аслă вăрçăра кĕрешекен пиншер хĕрарăмсене хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă. Совет хĕрарăмĕсем аманнă красноармеецсемшĕн тăрăшаççĕ. Хĕрлĕ Çар валли парнесем тата ăшă тумтирсем пухас ĕçе организацилеççĕ, самолетсемпе танксем тума укçа пухас ĕçе активлăн хутшăнаççĕ, фронтовиксен çемьисемшĕн вĕсен амăшĕсем пек тăрăшаççĕ, хăйсен çемьисенче пăхса ӳстерме тăлăха юлнă ачасене илеççĕ. Вуншар пин совет хĕрарăмĕсем аманнă боецсен пурнăçне çăлса хăварма хăйсен юнне параççĕ.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ партин пур организацийĕсене те Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Кунне—мартăн 8-мĕшне массăллă-политикăллă анлă кампани туса ирттерме хушать.

Отечественнăй вăрçăн хальхи татăклă самантĕнче совет халăхĕн тата совет хĕрарăмĕсен тăшмана çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе татах та хĕрӳллĕнрех, пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Хĕрлĕ Çар наступлениллĕ çапăçусем туса пырать, нимĕçсене совет çĕршывĕнчен хăваласа кăларса пырать. Анчах тăшман вăйлă-ха, вăл хаяррăн хирĕç тăрать. Гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳ вăхăт ыйтать, жертвăсем тума хушать, пирĕн пĕтĕм вăй-хала тата пур майсене те мобилизацилеме хушать.

Хĕрарăм ĕçĕн пур резервĕсене те пĕтĕмĕшпех мобилизацилес пулать. Вăя шеллемесĕр ĕçлесси—кашни совет хĕрарăмĕпе хĕрĕн таса тивĕçĕ пулса тăрать. Хĕрарăмсене производство ĕçне вĕрентессине тата малта пыракан работницăсемпе колхозницăсене ертсе пырас ĕçе ларттассине татах та анлăрах сарса ярас пулать. Парти, совет, профсоюз тата комсомол организацисен обществăллă производствăра ĕçлекен хĕрарăмсен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн пур майсемпе те тăрăшас пулать, мĕншĕн тесен хĕрарăмсене малашне те производствăна явăçтарассин ăнăçлăхĕ тата вĕсен ĕçĕн тухăçлăхĕ çакăнтан килсе тăрать. Парти, комсомол тата профсоюз организацисен хĕрарăмсене, уйрăмăнах производствăна çĕнĕрен килнĕ хĕрарăмсене, политикăллă воспитани парас ĕç çине питех те вăйлăн çавăрăнса пăхас пулать.

Хĕрарăмсем—работницăсем, инженерсем, техниксем! Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара тата ытларах танксем, самолетсем, орудисем, пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем, тумтирсем парса тăрăр! Металл шăратса кăларас, кăмрăк кăларас, электроэнерги туса кăларас ĕçе ӳстерĕр. Хăвăрăн ĕçĕн техникине лайăх вĕренсе алла илĕр тата ĕçтухăçлăхне ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пырăр.

Хĕрарăмсем — железнодорожницăсем! Фронт валли хĕçпăшалсем, боеприпассем тата апат-çимĕç тиенĕ поездсене хăвăртрах çӳретĕр. Нимĕç фашисчĕсен вăрă-хурахĕсене çĕмĕрсе пыма Хĕрлĕ Çара пулăшăр! Чугунçулсене пĕр чăрмавсăр, тĕрĕс ĕçлеттерессишĕн кĕрешĕр! Чугунçул транспорчĕн ĕçне вĕренсе алла илĕр!

Хĕрарăмсем — колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем! Эсир хирсенче мĕнле ĕçленинчен халĕ Хĕрлĕ Çарпа тыла апат-çимĕç парса тăрасси килет. Эсир халĕ çуракин ăнăçлăхне татса паратăр. 1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илĕр. Йăлтах фронт валли, йăлтах çĕнтерӳ валли!

Хĕрарăмсем—связисткăсем, снайперсем тата отечественнăй вăрçăн мĕнпур участницисем! Çапăçури пултарулăха ывăнма пĕлмесĕр вăйлатса пырăр! Хĕрлĕ Çарти çыхăну ĕçне пур майсемпе те лайăхлатса пырăр, тĕл пеме вĕренĕр! Пирĕн войскăсене ăнăçлă наступлени тума пĕтĕм вăйпа пулăшăр! Гитлерла захватчиксене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырăр!

Хĕрарăмсем—санитаркăсем, медсестрасем, врачсем! Аманнă боецсене малти позицисенче çийĕнчех пулăшу парăр, аманнă боецсемпе командирсене çапăçу хирĕнчен вĕсен хĕçпăшалĕпе пĕрле илсе тухăр, госпитальсенче сывалакан боецсемпе командирсемшĕн тимлĕн тăрăшăр! Советăн аманнă воинĕсен пурнăçĕ тата вĕсем строя таврăнасси Сирĕн ĕçрен килнине асра тытăр!

Хĕрарăмсемпе хĕрсем! Çар специальноçĕсене лайăх вĕренсе алла илĕр! Тĕл пеме вĕренĕр. Сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран хӳтĕленес ĕçе, санитари ĕçне, çыхăну ĕçне вĕренĕр. Аманнă боецсене лайăх пăхăр, фронтовиксен çемьисемшĕн вĕсен амăшĕсем пек тăрăшăр! Тăлăх ачасемшĕн тăрăшассине хăвăр çине илĕр, тăлăха юлнă пĕр ача та амăшĕ пек ăчашланисĕр тăрса ан юлтăр.

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă хуласемпе ялсенчи хĕрарăмсемпе хĕрсем! Промышленноçа, ялхуçалăхне, шкулсене, библиотекăсене, больницăсемпе пекарньăсене хăвăртрах юсаса ĕçе ярăр. Хуласемпе ялсен пурнăçне йĕркелĕр!

Тăшман вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенчи хĕрарăмсемпе хĕрсем! Эсир ирĕклĕхе тухас вăхăт çывхарса килет! Гитлерла мерзавецсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе тăкма партизансен отрячĕсене пулăшăр, чакса пыракан тăшмана пирĕн хуласемпе ялсене çунтарса яма ан парăр!

Хĕрарăмсем—партизанкăсем! Наступлени тăвакан Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйпа, мĕнпур майсемпе пулăшăр! Тăшман тылĕнче партизанла кĕрешӳ çулăмне анлăрах сарса ярăр! Партизансен отрячĕсем панă боевой заданисене вăя шеллемесĕр пурнăçа кĕртсе пырăр! Тăшман войскисене фронта куçарма, хĕçпăшалсемпе боеприпассем турттарса килме чăрмантарăр, тăшманăн çар склачĕсене çунтара-çунтара ярăр! Çар ĕçне ывăнма пĕлмесĕр вĕренĕр! Нимĕç захватчикĕсене кашни утăмрах йĕрлесе тата пĕтерсе пырăр!

ВКП(б) Центральный Комитечĕ работницăсене, колхозницăсене, интеллигентла ĕçри хĕрарăмсене, санитаркăсене, медсестрасене, врачсене, связисткăсене, мухтавлă партизанкăсене, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕççынни хĕрарăмĕсене Хĕрарăмсен Пĕтĕм Тĕнчери Коммунистла Кунĕ ячĕпе саламлать тата отечественнăй вăрçăн татăклă самантĕнче совет хĕрарăмĕсем хăйсен пĕтĕм вăйне нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмĕшпех çĕмĕрсе тăкас ĕçе парĕç тесе — çирĕппĕн шанса тăрать.

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен) ПАРТИН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

Шупашкара пирĕн земляк—Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Н. Орлов килчĕ

Ĕнер, мартăн 5-мĕшĕнче, Шупашкара пирĕн мухтавлă земляк — Совет Союзĕн Геройĕ капитан Федот Никитич Орлов юлташ килчĕ.

Ф. Н. Орлов юлташ республикăри комсомол активĕпе ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен канашлăвĕнче пулчĕ. Канашлура пулнисем чăваш халăхĕн паттăр ывăлне питех те ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç.

Совет Союзĕн Геройĕ Орлов юлташ канашлура хĕрӳллĕ сăмах тухса каларĕ. Вăл пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар ылханлă нимĕç оккупанчĕсене кунран-кун вăйлăнрах аркатса пыни çинчен, тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн халăхăн мĕнпур паттăр ывăлĕсемпе пĕрле тунă хăйĕн боевой ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Çамрăксем унăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлерĕç, тăван çĕршывшăн пыракан отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче чапа тухнă Сталинла сокола тăвăллăн алă çупса саламларĕç.

Республикăри ĕççыннисем янă парнесем фронта çитнĕ

Чăваш республикинчи ĕççыннисем хăйсем шефа илнĕ чаçа Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа парнесем ярса пачĕç. Парнесене илни çине ответлесе, Н-ски чаçăн командирĕ Ерохин юлташ ВКП(б) Чăваш Обкомне Чарыков юлташ ячĕпе çакăн пек телеграмма ячĕ:

ШУПАШКАР, ВКП(б) ОБКОМНЕ ЧАРЫКОВ ЮЛТАША

Делегаци çитрĕ, парнесем илтĕмĕр. Н-ски чаçăн боецĕсемпе командирĕсенчен тата политработникĕсенчен чăваш халăхне хĕрӳллĕн тав туса салам калăр.

ЕРОХИН.

Мускав, Кремль

СТАЛИН юлташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксем, хăйсен республикăри канашлăвне пухăннăскерсем, Сире, халăхсен аслă çулпуçне тата Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен полководецне, çамрăкла хĕрӳллĕ салам яраççĕ.

Эпир Сирĕн историллĕ приказ çине ответлесе фабрикăсемпе заводсенче производствăллă çĕнĕ çĕкленӳ вăйланса пынă тата май уйăхĕнчи социализмлă ăмăрту сарăлса пынă вăхăтра, пирĕн колхозлă хресченсем вăрçă вăхăтĕнчи çуракине лайăхрах хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе пĕтĕм вăйне хурса ĕçленĕ вăхăтра пухăнтăмăр.

Пирĕн республикăри колхозсем иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлерĕç. Çак ĕçре пирĕн колхозсенчи çамрăксем те пĕчĕк мар вырăн йышăнчĕç. Çамрăксем ялхуçалăх машинисем валли 235.000 тенкĕлĕх ытла запаслă пайсем пухрĕç, 7.500 ытла ялхуçалăх машинисем юсаса хатĕрлерĕç, çĕршер те пиншер комсомолецсем тата союзра тăман çамрăксем тырпулсене пухса кĕртнĕ çерте ĕçлерĕç, пионерсемпе школьниксем иртнĕ çулта 4.183.000 ытла ĕçкунĕ турĕç. Эпир хамăрăн перекетленĕ укçа-тенкĕпе те фронта активлăн пулăшатпăр. Боевой самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума эпир 11.000.000 тенкĕ ытла хывăрăмăр.

Республикăри çамрăксем килес çуракине хатĕрленес ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Эпир пиншер тонна вăрлăх сортласа хатĕрлерĕмĕр, вырăнти удобренисене нумай пухса турттарса кăлартăмăр. Анчах та эпир тунă ĕçсем çителĕклĕ мар-ха. Килес ялхуçалăх çулĕ татах та йывăртарах тĕрĕслӳсен çулĕ пулать тата уй-хир ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттермешкĕн колхозлă ялăн пĕтĕм вăйне мобилизацилеме хушать. Çавăнпа та ялти комсомол организацийĕсен тата колхоз çамрăкĕсен халĕ çуракине хатĕрленес ĕçе тĕп вырăна хумалла.

Пирĕн паттăр Хĕрлĕ Çар тăшмана вăйлăн пыра-пыра çапать. Виçĕ уйăх хушши наступлени туса, совет войскисем противникăн 112 дивизине аркатса тăкрĕç, 17.000 орудине, нумай танксемпе самолетсене тытса илсе пĕтерсе тăкрĕç, вуншар облаçсемпе республикăсене фашистла ирсĕрсенчен хăтарчĕç. Хĕрлĕ Çарăн çак ăнăçăвĕсем пире тылри ĕçре çĕнĕ паттăр ĕçсем тума хавхалантараççĕ.

Пирĕн задачăсем паллă. Вĕсене ялхуçалăхĕнче малта пыракансен сырăвĕнче тата пирĕн республикăпа Мари республики хушшинчи социализмлă ăмăртăвăн договорĕнче кăтартса панă.

Эпир Сире, Сталин юлташ, çапла шантарса калатпăр: Чăваш республикинчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем, Эсир Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă тĕле кăларнă приказпа хавхаланнăскерсем, тăван çĕршыв умĕнче парăмра юлмĕç, кăçалхи ялхуçалăх çулĕнче хăйсем умĕнче тăракан задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртĕç.

Сывă пултăр эпир нимĕç захватчикĕсене çĕнтересси!

Сывă пултăр аслă полководец Сталин юлташ!

Республикăри комсомол активĕпе ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксен канашлăвĕ

Канашлăвăн мартăн 5-мĕшĕнчи ларăвĕнче ВКП(б) Обком секретарĕн Белков юлташăн доклачĕ тăрăх пренисем малалла пулса пычĕç.

Канашлăва ертсе пыраканĕ — ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ комсомолăн Калинино районĕнчи Пушкин ячĕпе тăракан колхозри организаци секретарьне Васильев юлташа сăмах парать.

Васильев юлташ комсомолецсемпе çамрăксем колхоз производствинче малти ретре пыни çинчен калать.

Ун хыççăн Чкаловски райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ Никитина, ВЛКСМ Комсомольски райкомĕн секретарĕ Голландцева юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем комсомолецсемпе комсомолкăсем, колхоз çамрăкĕсем вăрçă вăхăтĕнче колхоз производствишĕн ытларах тăрăшнине нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пачĕç.

ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ В. П. Чернов юлташ 1942-мĕш ялхуçалăх çулĕн çитĕнĕвĕсемпе çитменлĕхĕсем çинчен, пĕлтĕр республикăри МТС-сенчи тракторсен паркĕсем чылай лайăх ĕçлени çинчен, республикăри комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсен хальхи задачисем çинчен каларĕ.

— Çамрăксем, çитес çуракинчи йывăрлăх пуринчен ытла сирĕн çине ӳкет, — терĕ Чернов юлташ. — Çавăнпа çуракине лайăх хатĕрленсе, ăнăçлăн ирттерессишĕн сирĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелле пулать.

Фронта кайнă трактористсемпе комбайнерсен тата ялхуçалăх специалисчĕсен вырăнĕсене тăнă çамрăксемпе хĕрарăмсем пĕлтĕр мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Сăмахран, Еллĕк МТС-чи 39 хĕрарăм-трактористкăран 33-шĕ тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне ирттерсе тултарчĕç.

Чернов юлташ канашлу участникĕсене çитес çуракинче пĕлтĕрхи йăнăшсене урăх тумалла марри çинчен асăрхаттарать. Тракторсене тĕплĕн юсанипе пĕрлех, тракторсем çумне кăкарса ĕçлемелли инвентарьсене — плугсемпе сеялкăсене, культиваторсене юсасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхма сĕнет. Вăл çамрăксене халĕ пуринчен ытла вăрлăхпа чĕрĕ туртăм вăйне çураки валли хатĕрлесси, колхоз кадрĕсемпе механизаторла кадрсене вĕрентсе хатĕрлесси, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухасси тата çураки вăхăтĕнче политикăллă-массăллă ĕçе тĕрĕс организацилесси çине тимлĕн çавăрăнса пăхма чĕнчĕ.

Канаш районĕнчи «Малалла» колхоз председателĕ, ВЛКСМ организацин секретарĕ Кукушкина юлташ çамрăксем колхоз производствишĕн чăн-чăн хуçасем пек тăрăшни çинчен, вĕсем лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлени çинчен калать.

Канашлу участникĕсем комсомолăн Мари АСС Республикинчи организацийĕнчен килнĕ делегатăн Берючева юлташăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлеççĕ.

Берючева юлташ канашлу делегачĕсене Мари АСС Республикинчи комсомолецсемпе çамрăксен ячĕпе хĕрӳллĕн саламлать.

— Комсомолăн Мари Республикинчи организацийĕсем çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешĕве тухрĕç, —тет Берючева юлташ. — Çуракине пур енлĕн хатĕрленсе тухассишĕн комсомолăн республикăри организацийĕсем пĕр-пĕринпе социализмлă ăмăртса ĕçлеççĕ.

Берючева юлташ ялхуçалăхĕнче малта пыракан çамрăксемпе комсомол активĕн Мари республикинчи канашлăвĕн участникĕсем çуракине хатĕрленсе ирттерес тата 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн пурнăçлас тĕлĕшпе Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксене социализмлă ăмăртăва чĕнме йышăнни çинчен пĕлтерет. Канашлу участникĕсем ку сĕнĕве хапăл тусах йышăнаççĕ, сĕнĕве нумайччен алă çупнипе ответлеççĕ.

Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» колхозăн членĕ свинарка Порфирьева юлташ комсомолăн колхозри организацийĕ ялхуçалăх ĕçĕсене кăна мар, обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе те активлăн хутшăнни çинчен каласа парать.

Первомайски вăтам шкулĕнче вĕренекен пионер Янаслов шкулти пионер дружинин пархатарлă ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ.

Ун хыççăн Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Ленин орденлĕ, Сталин ячĕпе тăракан колхозăн агрономĕ Ерлакова юлташ тухса каларĕ.

Канашлу президиумне Сталин юлташ патне саламлă телеграмма яма сĕнӳ параççĕ. Канашлу участникĕсем юратнă çулпуçăмăр Сталин юлташ патне ямалли çырăва тăвăллăн алă çупса йышăнаççĕ. Залра халăхсен çулпуçне сывлăх сунса саламланă сасăсем, урра кăшкăрни нумайччен янраса тăрать.

Ун хыççăн канашлура комсомолăн Куславкка районĕнчи «Путь Маркса» колхозри организацин секретарĕ Елесина, Комсомольски МТС-ĕн трактористки Юманова, ВЛКСМ Шăмăршă райкомĕн секретарĕ Старостина тата Етĕрне районĕнчи «Красная звезда» колхоз председателĕ Яковлев, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн профессорĕ А. Пельцих, ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов, комсомолăн Вăрнар райкомĕн секретарĕ Поляева тата ытти юлташсем тухса каларĕç. Пельцих юлташ канашлăва пухăннă комсомолецсемпе çамрăксене коксагыз тата сахăр кăшманĕ акса тăвас ыйтусемпе тĕплĕнрех интереслеме, çак ĕçре пуçарулăх кăтартса пыма чĕнчĕ.

Малов юлташ комсомол организацийĕсемпе çамрăксен çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе паян тумалли ĕçĕсем çинчен чарăнса тăчĕ. Вăрлăхсен пахалăхне упрас, вăрлăхсене сыхласа усрас ĕçе комсомолецсемпе çамрăксен хăйсем çине илме кирлине палăртрĕ. Вăрлăха яровизацилесси çинчен, вăрлăха протравливани тăвасси çинчен тата кĕрхи тыра калчисене çуркунне апат парасси çинчен чарăнса тăчĕ.

Канашлăва Шупашкар хулине халь çеç килнĕ пирĕн земляк — Совет Союзĕн Геройĕ Ф. Орлов юлташ пычĕ. Комсомол активĕ, ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан çамрăксем — героя тăвăллăн алă çупса, чĕререн саламласа кĕтсе илчĕç.

Ф. Орлов юлташа пысăк хавхаланупа канашлăвăн президиумне суйларĕç. Совет Союзĕн Геройĕ пирĕн чаплă земляк Ф. Орлов юлташ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ. Канашлăва пухăннисем Геройăн кашни сăмахне тимлĕн итлерĕç. Орлов юлташăн сăмахĕ çине ответлесе, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. Михайлов юлташ сăмах каларĕ. Михайлов юлташ Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксене Верховный Главнокомандующи Сталин юлташ иккĕмĕш хут янă салама Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунине вуласа пачĕ.

— Парти организацийĕ ертсе пынипе, — тет Михайлов юлташ, — Чăваш республикинчи комсомолецсемпе çамрăксем колхозсене çуракине çĕнĕ çитĕнӳсемпе ирттерме вăйлăн пулăшĕç.

Канашлăва пухăннă комсомол активĕ, ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан çамрăксем фронтпа çĕршыва малалла та вăйлă пулăшу парассишĕн ырми-канми ĕçлеме хатĕр тăнине партипе правительствăна, тата Сире, Орлов юлташ, шантарсах калатпăр, — терĕ Михайлов юлташ, канашлăвăн шухăшне каласа парса.

Канашлу республикăри пĕтĕм комсомолецсемпе çамрăксене чĕнсе çыру çырма йышăнчĕ.

Çакăнпа республикăри комсомол активĕпе ялхуçалăх ĕçĕнче малта пыракан çамрăксен канашлăвĕ хупăнчĕ. Канашлу хыççăн концерт пулчĕ.

Суту-илӳ тата пĕрлешсе апатланас ĕçĕн организацийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн итогĕсем

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Комитечĕ, ССР Союзĕн Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕ, СССР-па РСФСР Центросоюзĕсем суту-илӳ тата пĕрлешсе апатланас ĕçĕн организацийĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулти IV-мĕш кварталти итогĕсене пăхса тухнă.

Вĕсем Шупашкар райпотребсоюзне (председателĕ Гагарин, профсоюз райкомĕн председателĕ Оленцева юлташсем) тата Сĕнтĕр райпотребсоюзне (председателĕ Харитонов, профсоюз райкомĕн председателĕ Соколов юлташсем) — **виççĕмĕш преми** — 15.000-шер тенкĕ памалла тунă.

Сĕнтĕр районĕнчи Мăн Сĕнтĕр сельпоне (сельпо председателĕ Хавалкин, местком председателĕ Кошкин юлташсем) **виççĕмĕш преми** — 3.000 тенкĕ, Улатăр районĕнчи Анютино сельповĕн ялти магазинне (директорĕ Учускин юлташ) — иккĕмĕш **премиı**, Куславкка сельповĕн Çĕнĕ Сала ялĕнчи магазинне (директорĕ Етрухина юлташ), Шупашкар районĕнчи Кӳкеç сельповĕн Илпешри лавкине (заведующийĕ Хазилова юлташ) тата Калинино районĕнчи Алгазино сельповĕн магазинне (директорĕ Николаева юлташ) — **виççĕмĕш преми** памалла тунă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Мартăн 4-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Мартăн 4-мĕшĕнче Ржевран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем Оленино хулипе чугунçул станцине тата Чертолино ятлă пысăк чугунçул станцине тытса илнĕ.

Орел облаçĕнче пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Севск хулине тытса илнĕ.

Курск облаçĕнче пирĕн войскăсем татăклăн атакăласа Суджа хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Ржевран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пырса Оленино хулипе чугунçул станцине, Чертолино тата Манчалово чугунçул станцийĕсене тытса илнĕ. Манчалово станцийĕшĕн пынă çапăçура Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 6 паровоз, 3 поезд тата вагонсем нумай тытса илнĕ. Ржевран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçса пынă. Халăх пурăнакан вуншар пункта нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен тасатнă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ, вĕсене халь шута илеççĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем хăйне вăйлăн хӳтĕлекен тăшмана хирĕç наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем хăйсем тĕреклетнĕ позицисене каялла тытса илес тесе, темиçе хут та контратака тунă. Анчах нимĕнле ăнăçу та тăваймасăрах каялла чакнă, пирĕн позицисем умĕнче вĕсен 800 ытла вилли тата персе çĕмĕрнĕ 4 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Ворошиловградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем тăшманпа çапăçса хăй тĕллĕн çӳрекен пĕр оруди, 5 пулемет, 3 миномет тата радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем, тăшманăн контратакине сирсе ярса, гитлеровецсене пĕр рота таран вĕлерсе пĕтерпĕ тата нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă.

* * *

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă. Н-ски часть тăшмана халăх пурăнакан пысăк пунктран хĕссе кăларнă, боеприпассен складне, инженерла пурлăх складне тата хĕçпăшалсем нумай тытса илнĕ. вĕсене халь шута илеççĕ.

* * *

Льгов, Дмитриев-Льговский районĕнче пирĕн войскăсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Льгов хулишĕн пынă çапăçусенче юлашки тăватă кун хушшинче нимĕçсен 5000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 300 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Тĕрĕсрех палăртнă тăрăх, Льговра 4 танк, 20 оруди, 75 миномет, 66 пулемет, 150 автомат, 700 винтовка ытла тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем халăх пурăнакан икĕ пунктшăн вăйлăн çапăçнă. Трофейăсем тытса илнĕ, çав трофейăсем хушшинче 2 оруди, 11 миномет, 20 пулемет, 72 автомат, 370 винтовка, 2.500 мина, 17.000 патрон тата боеприпассен икĕ склачĕ пур. Çав пунктсем патне пымалли вырăнсенче тата вĕсен урамĕсенче гитлеровецсен 800 виллине яхăн шутласа кăларнă. Темиçе вуншар нимĕç салтакне тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн пĕр участокĕнче пирĕн чаçсем халăх пурăнакан икĕ пункта тытса илнĕ. Нимĕç гарнизонĕсене, хирĕç тăнăскерсене, пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски часть нимĕçсене вăйлă тĕреклетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Тăшман васкаса чакнипе хăйĕн аманнă салтакĕсене тата техникине çапăçу хирĕнчех пăрахса хăварнă.

* * *

Витебск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен аэродромне тапăннă. Партизансен ятарласа уйăрнă ушкăнĕ гилеровецсен аэродромри командипе çапăçнă вăхăтра партизансен тĕп вăйĕсем самолетсем лармалли площадкăна кĕрсе кайнă та унти çĕр çинче ларнă 4 самолета пĕтерсе тăкнă. Темиçе кун иртсен, çав отряд нимĕçсен боеприпассемпе тумтирсем турттарса пыракан çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, Совет патриочĕсем боеприпассемпе тумтирсем нумай тытса илнĕ. Çĕмĕрĕлнĕ эшелонран мĕн илсе кайма пултарайманнине партизансем çунтарса янă.

* * *

Норвеги патриочĕсем, хăйсене хаяррăн тыткаланине пăхмасăрах, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсемпе кулленех кĕрешеççĕ. Берген районĕнче хĕçпăшаллă норвежецсен ушкăнĕ нимĕçсен автоколонни çине пенĕ. Осло хулинче вунă кун хушшинче кăна 8 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ. Тронхейм районĕнче Норвеги партизанĕсем пĕр прожектора тата ăна сыхласа тăнă гитлеровецсене пĕтерсе тăкнă.

Мартăн 5-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Мартăн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Ржевран кăнтăраллахра тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн малалла тапăнса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем 5—10 километр малалла кайнă. Нимĕçсен йышлă контратакисене сирсе янă, тăшмана пысăк çухатусем тӳстернĕ. Ытти участоксенче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан 42 пункта йышăнса илнĕ, трофейăсем нумай тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Ĕнер Оленино хулине тытса илнĕ хыççăн пирĕн чаçсем малалла куçса пынă, хуларан кăнтăртарахра вĕсем халăх пурăнакан 10 пункта тытса илнĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре Н-ски часть артиллерирен вăйлăн персе тăнă хыççăн тăшман окопĕсен линине йышăнса илнĕ. Противникăн контратакисем ăнăçман. Çапăçу хирĕнче гитлеровецсен 200 çити вилли тата персе çĕмĕрнĕ 3 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Харьковран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенин чаçĕсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илнĕ чухне пирĕн боецсем 2 танкетка, пĕр броневик, 4 оруди, шултăра калибрлă 3 пулемет, продовольствипе выльăх апачĕн складне тытса илнĕ.

* * *

Льгов районĕнче пирĕн войскăсем, малалла куçса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Çав пунктсенчен пĕриншĕн пынă çапăçура нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă, 5 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. 9 оруди, 13 пулемет, тĕрлĕ грузсем тиенĕ 24 автомашина, минăсен складне, снарядсен шаршанĕсене тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Кубань çинче Н-ски чаçăн боецĕсем, гитлеровецсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, вĕсен тĕреклетнĕ позицийĕсене тытса илнĕ. Нимĕçсен 100 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 10 автомашина, 15 лав, 3 миномет тата 12 пулемет тытса илнĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ февраль уйăхĕн вĕçĕнче нимĕçсен гарнизонне тапăннă. Партизансем 25 гитлеровеца, çав шутра 5 офицера, вĕлернĕ тата тăшманăн горючи складне пĕтерсе тăкнă. Совет патриочĕсем 8 пулемет, 39 винтовка, 152 граната тата 12.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Совет войскисем Ржев хулине илни гитлерла пуçлăхсене хăратса пăрахнă. Мартăн 3-мĕшĕнче, 15 сехетре, Берлинри радио кĕскен çапла пĕлтернĕ: «Фронт линине кĕскетес тесе нимĕç войскисем Ржевран тухса кайнă», тенĕ. 10 минута иртсенех çав радиостанциех нимĕç войскисем Ржевран тухса кайнă тенĕ хыпара суяна кăларнă. Каярахпа, Берлинра çынсем пăртак тăна кĕрсе çитсен, Германин информаци бюровĕ çакăн пек заявлени пичетленĕ: «Хĕвелтухăç фрончĕн центральнăй участокĕнче, войскăсене план тăрăх куçарса пынă май, нимĕç войскисем Ржев таврашĕнчи фронтăн малалла кукăрăлса тăракан пайне пăрахса хăварнă».

Нимĕç войскисем «фронт линине кĕскетес тесе» тата «войскăсене план тăрăх куçарса пынă май» каялла чакни çинчен Берлин пĕлтернисене эпир питĕ лайăх пĕлетпĕр. Берлинри жуликсем çак хутĕнче те выляса янă карттинах туртса кăларнă. Анчах гитлеровецсем мĕншĕн Германи командованийĕн хĕлĕпех «фронт линине тӳрлетме», «кĕскетме» тата «ытти çĕре куçарма» тивнине ăнлантарса памаççĕ.

Нимĕçсен фашистла войскисем Ржевран хăйсен ирĕкĕпе тухса кайманни çинчен, вĕсене унтан, ытти нумай хуласенчен хĕссе кăларнă пекех, Хĕрлĕ Çар хĕссе кăларни çинчен гитлеровецсем Германи халăхне каласа пама хăраççĕ. Çавăнпа та вĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра ĕçсем мĕнле пыни çинчен пĕр чарăнмасăр суяççĕ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОМСОМОЛ АКТИВĔПЕ ЯЛХУÇАЛĂХĔНЧЕ МАЛТА ПЫРАКАН ÇАМРĂКСЕН КАНАШЛĂВĔ

Çамрăксем ĕçе пуçарса пыраççĕ

(Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз агрономĕн Ерлакова юлташăн сăмахĕ)

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче пирĕн, комсомолецсемпе çамрăксен, мĕнпур колхозниксене колхозницăсен тылра фронтри пекех ĕçлес пулать. Пирĕн колхозри вăй-питти арçынсем фронта кайнă. Ялхуçалăхĕнчи пысăк та ответлă ĕçсем çамрăксемпе хĕрарăмсене тивеççĕ. Эпир хамăрăн задачăсене пурнăçа кĕртсе пыратпăр.

1942-мĕш ялхуçалăх çулне пирĕн колхоз чăннипех те вăрçă вăхăтĕнчи пек, ăнăçлăн вĕçлерĕ. Мĕнпур агротехникăллă мероприятисене эпир вăрçăчченхинчен начар мар, лайăхрах та туса ирттертĕмĕр. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир иртнĕ çулта кашни гектартан 19-шар центнер тĕштырă туса илтĕмĕр.

Вăйлă тырпул хăй тĕллĕн пулмасть. Уншăн нумай вăй хумалла, çине тăрса ĕçлемелле. Уйрăмах тата колхоза, ĕçе, çĕре юратни кирлĕ. Аслă Сталин ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем хăйсен колхозне, хăйсен çĕрне юратаççĕ. Пирĕн колхоз çĕрĕн тăприне сăнаса пăхсан, вăл тĕпренех улшăнни, пачах та урăх тăпра пулса тăни курăнать. Колхоза актпа ĕмĕрлĕхех çирĕплетсе панă çĕре колхозниксем тимлĕн ĕçлесе çемçетеççĕ. Аякран пынă çын пирĕн колхозăн çĕрĕ кӳршĕри колхозсен çĕрĕнчен куçкĕретĕнех уйăрăлса тăнине асăрхать.

Мĕнрен килет-ха çакă вăл? Çакă тăпра пур çĕрте те пĕр пекех пулнă. Вăл пирĕн колхозниксем, комсомолецсем пуçарса пынипе, парторганизаци ертсе пынипе, çĕре çемçетессишĕн нумай вăй хурса ĕçленинчен, çĕре имçамсем, органикăллă тата минераллă удобренисем нумай парса тăнинчен, агротехникăна тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынинчен килет.

Кăçалхи вăйлă тырпулăн никĕсне эпир иртнĕ кĕркуннех хывма тытăнтăмăр. Çурхи тырăсем акмалли пĕтĕм çĕр лаптăкне 18—20 сантиметр тарăнăш тĕплĕн сухаласа хăвартăмăр. Çавăн пекех пĕтĕм çĕр лаптăкĕ çине тислĕк тăкрăмăр. Тулă акмалли кашни гектар çине 50-шар лав лайăх çĕрнĕ тислĕк хыврăмăр. Тислĕке эпир яланах хĕлле колхозниксен килĕсенчен, колхоз картишĕсенчен пухса пыратпăр. Купаласа çĕртетпĕр те, сапаласа пăрахса çийĕнчех сухалама тытăнатпăр. Иртнĕ çулсенче пирĕн колхоз минераллă удобренисем нумай турттарнă. Кăçалхи çул ун пек удобренисем нумаях кĕтме çук. Пирĕн транспортпа промышленноçăн халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, татах та кирлĕрех ĕçсем туса пыма лекет. Çавăнпа та эпир минераллă удобренисене вырăнтах тупма тăрăшатпăр. Халĕ эпир кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ 200 центнер яхăн пухрăмăр. Кĕрхи тырăсен калчисене, азотлă удобренисем вырăнне, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе тăрантарма шутлатпăр. Результат начар пулмĕ тесе шанатпăр. Кунсăр пуçне эпир 250 центнер ытла кĕл пухрăмăр. Çав кĕле эпир Вăрнар районĕнче кăна мар, Йĕпреç районĕнче те пуçтарнă. Йĕпреç районĕнче çав кĕле пире ирĕклĕнех паракан çынсем те тупăнчĕç.

Вăйлă тырпул туса илес ĕçре вăрлăх пĕрремĕш вырăн йышăнса тăрать. Мĕнле вăрлăх акатăн, çавăн пек тырпул илетĕн. Пирĕн вăйлă тырпул илмелле, çавăнпа та лайăх вăрлăх кирлĕ. Вăрлăхсене эпир кирлĕ чухлĕ кăна мар, запаслăх та хывса хăвартăмăр. Пирĕн вăрлăхсем, лабораторире тĕрĕсленĕ тăрăх, питĕ паха. Çакна эпир хамăрăн колхозри машинăсемпе — веялкăсемпе, триерсемпе туллин усă курнипе тума пултартăмăр. Вăрлăхсене 2—3-шер хут сортировка витĕр кăларнă. Кунсăр пуçне, çумкурăкĕсен вăррисене вĕçне çитичченех тасатас тесе, аласемпе те аланă.

Кунта манăн çамрăксемпе комсомолецсене çакăн çинчен асăрхаттарас килет: хăшпĕр колхозсенче вăрлăхсем хатĕрлес ĕç çине кирлĕ пек çавăрăнса пăхмаççĕ. Çуракине хатĕрленме, вăрлăхсем хатĕрлесе çитерме пулăшас шутпа пĕр-пĕр колхоза пыратăн та вара, унта вĕсен вăрлăхсем мĕнли çинчен ыйтсан: пирĕн вăрлăхсем аван, тесе калаççĕ. Анчах тĕрĕслесен. пачах урăххи курăнать. Çапла вара çавăн пек çынсем никама та мар, хăйсене кăна улталаççĕ. Комсомолецсен çав йăлана яланлăхах пĕтермелле. Комсомолецсемпе çамрăксем, вăрлăхсене çуракине хатĕрлесе çитерес ĕçе хăвăр çине илĕр. Ку енĕпе палăракан çитменлĕхсене халех пĕтерĕр. Вăрлăхсем вăйлă тырпулăн ăнăçлăхне татса параççĕ.

Çамрăксем умĕнче тăракан тепĕр задача вăл — Чăваш республикинчи колхозсенче техникăллă çĕнĕ культурăсем акса тăвасси пулса тăрать. 1942 çулта эпир хамăр колхозра çĕнĕ культура — кок-сагыз акса турăмăр. Çав чĕртавар пирĕн оборона промышленноçне питех те кирлĕ. Çавăнпа та эпир çак ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхрăмăр. Кок-сагыз акма эпир малтанах тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр, çĕре лайăх сухаласа çемçетрĕмĕр, тăпрана удобрени хыврăмăр, çак енĕпе куллен ĕçлеме уйрăм звено организацилерĕмĕр. Звенора пуринчен ытларах çамрăксем пулчĕç. Çамрăксем çĕнĕ культура туса илес енĕпе юратса ĕçлерĕç. Çапла вара кашни гектартан 9 центнер ытла кок-сагыз тымарĕ илтĕмĕр.

Кăçалхи çул пирĕн тата тепĕр çĕнĕ культура — сахăр кăшманĕ акса тумалла. Ку ĕç валли эпир çĕнĕ звено организацилерĕмĕр. Унта та, пуринчен ытларах çамрăксем тăраççĕ. Çак паха задачăна та эпир ăнăçлăнах пурнăçа кĕртĕпĕр тесе шанатпăр.

Эпир комсомолецсемпе çамрăксене уйрăм участоксем тăрăх вырнаçтарса тухнă. Вĕсенчен кашни хăйĕн ĕçĕшĕн пысăк ответлăха туйса тăрать. Çамрăк бригадирсем хăш чухне нумай çул ĕçленĕ бригадирсенчен те ирттереççĕ. Акă илер. Валя Миронова комсомолка бригадине. Унччĕнхи бригадир хăй фронта каяс умĕн Миронова юлташа: — Эпĕ фронта каятăп, ман бригада колхозра малта пынă, сана та малти вырăнта тăма сунатăп, тесе каласа хăварнă. Миронова комсомолка çав задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать.

Пирĕн колхозра çамрăксем мĕнпур ĕçе хастаррăн пуçарса пыраççĕ. Пирĕн умма аслă Сталин лартнă пысăк задачăсене эпир пурнăçа кĕртĕпĕр тесе шантаратăп.

ÇУРАКИНЕ КĔСКЕ СРОКРА, ПЫСĂК ПАХАЛĂХПА ТУСА ИРТТЕРЕССИШĔН

(Етĕрне МТС-ĕн тракторисчĕ Кошкин юлташ тухса каланă сăмахран).

Вăрçă ялхуçалăх умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. Колхозлă ял вăл задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Фронтпа çĕршыв ыйтнисене пурне те чыслăн тивĕçтерет. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерӳллĕ кĕрешĕвĕ тылри ĕççыннисен ĕçлес хастарлăхне çĕклет, ĕçе татах лайăхрах туса пыма вăй парать.

Етĕрне МТС-ĕн пĕтĕм коллективĕ тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕ Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă кун умĕнхи социализмлă ăмăртăва пысăк çĕкленӳпе хутшăнчĕç. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă куна тракторсене юсаса çитернипе кĕтсе илме обязательство илчĕç.

Хамăр çине илнĕ обязательствăна эпир чыслăн пурнăçларăмăр. Етĕрне МТС-ĕ хăйĕн тракторĕсене пĕтĕмĕшпех юсаса лартрĕ. Çак ĕçре комсомол организаци хастарлăх кăтартрĕ. Пурĕ 34 трактора юсаса лартнă, вĕсенчен 12 трактора капитальнăй ремонт тунă. МТС коллективĕ куллен ырми-канми ĕçлерĕ тата халĕ те çавăн пек ĕçлет.

Комсомол организацийĕ пуçарулăх кăтартать. Пĕр вăхăтра МТС-ра электричество пулмарĕ. Комсомолецсем хăйсен пухăвĕнче кун пирки сӳтсе-яврĕç, тракторсене юсас ĕçе кăвак çутăллах тытăнса сĕм тĕттĕмччен туса пыма пуçларĕç. Вĕсен пуçарăвне пĕтĕм коллектив йышăнса илчĕ. Çапла 4-мĕш квартал планне МТС срокра пурнăçларĕ. МТС дирекцийĕпе политотделĕ комсомолецсене паха ĕçшĕн ырларĕç, 5 комсомолеца тав турĕç.

Пирĕн МТС çуракине лайăх хатĕрленсе отлично туса ирттерессишĕн Сĕнтĕр МТС-ĕпе социализмлă ăмăртăва тухрĕ. МТС-ри комсомол организаци Дарья Гармаш бригадин çыравне тата Мускав облаçĕнчи çамрăк колхозниксен çыравне сӳтсе-явса дирекци умне хĕрарăм-трактористкăсен бригадине организацилес ыйтăва лартрĕ. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăй çине татăклă обязательствăсем илчĕ.

Апрелĕн 1-мĕшĕччен эпир тракторсене, плугсене, сеялкăсемпе сӳресене тата çуракинче кирлĕ ытти машинăсемпе ĕç хатĕрĕсене мĕнле юсанине татах тепĕр хут тĕрĕслесе тухатпăр. Мартăн 15-мĕшĕччен МТС-ăн мастерскойĕсемпе килкартишĕнче çирĕп йĕркелĕх тăватпăр. Массăллă-ăнлантарулла ĕçе туса пыма комсомол организаци хăйĕн чи лайăх çыннисене уйăрса çирĕплетрĕ.

Пирĕн Етĕрне МТС-ĕ иртнĕ çулсенче республикăри чи кайри вырăнта тăнă. Вăрçă вăхăтĕнче ĕç тĕпренех улшăнчĕ. Иртнĕ çул МТС пысăк утăм турĕ, кăçал МТС тракторсене юсас ĕçе ăнăçлăн пурнăçларĕ. Тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе хăварса, кăçалхи çуракине эпир чи кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттеретпĕр.

Р Ж Е В—П И Р Ĕ Н!

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян, нумай вăхăт хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн, совет войскисем Ржев хулине йышăнса илчĕç.

Ржев плацдармне пысăк вырăна хурса, нимĕçсем пĕлтĕрех хулана тата хула çывăхне вăйлă тĕреклетнĕ район туса хунă пулнă. Хула тулашĕсене темиçе хут пралуксемпе карса пĕтернĕ, вĕсен хыçĕнче вара ДОТ-сем нумай туса пĕтернĕ. Ржев патне пыракан çулсене шултăра калибрлă пулеметсемпе автоматсенчен персе тăмалла тунă. Фашистла гарнизон хулара та вăйлă çирĕпленнĕ: урамсемпе площадьсенче баррикадăсем тунă, хушăсене минăсем лартса тухнă, нумай çуртсенче тата урам кĕтессисенче дзотсем туса хунă. Тăшманăн нумай огневой точкисене чул çуртсен стенисенче, подвалсенче, чердаксемпе çуртсен крышисем çинче пытарнă пулнă.

Темиçе кун каярах пирĕн войскăсем Ржев хулине татăклăн штурмлама пуçланă. Совет подразделенийĕсен пĕрремĕш группи хуларан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман оборонине татса кĕнĕ те, наступлени туса пырса, Атăл хĕрринчи пысăк территорие тăшманран тасатнă. Хĕвелтухăç тата кăнтăр енчен пирĕн войскăсем часах хула çывăхнех пырса çитнĕ. Çакăнпа пĕрлех войскăсен тепĕр группи Ржевран хĕвеланăçнерехре наступлени пуçласа ярса, Атăл урлă каçнă. Сылтăм флангри подразделенисем Ржев — Великие Луки чугунçулĕ çине тухнă. Совет войскисен çав группировкин сулахай пайĕ хулана хĕвеланăç енчен татса, тылран хупăрлама пуçланă. Хулана чи пирвай генерал-майор А. Ф. Куприянов юлташăн, генерал-майор Н. Н. Олешев тата полковник В. П. Шульга юлташсен чаçĕсем вăркăнса кĕнĕ. Пирĕн подразделенисем урам хыççăн урам, квартал хыççăн квартал гитлеровецсенчен тасатса пынă. Противник вăйлăн хирĕç тăрса çапăçнă. Пирĕн командовани ятарласа малтанах уйăрнă штурмовой группăсем тăшманăн огневой точкисене пусарнă, пытанса ларнă нимĕç автоматчикĕсене вĕлерсе пынă. Паян каç пулнă çĕре Ржева пĕтĕмпех нимĕçсенчен тасатнă.

Ржев таврашĕнче тăшманăн 2.000 яхăн салтакĕпе офицерне пĕтернĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Вĕсен хушшинче 112 танк, тĕрлĕ калибрлă 78 оруди, 35 паровоз, 1.200 вагон пур.

Ялхуçалăх ĕçĕнче фронтри боецсем пек ĕçлеме тăрăшаççĕ

СОВЕТСКОЕ. Ищелькассинчи Молотов ячĕпе тăракан колхоз иртнĕ çулта пур ĕçсене те пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕ. Çакă вăл колхозри хĕрарăмсемпе хĕрсем уйхир ĕçĕнче ырми-канми ĕçленинче колхоз производствин пĕтĕм ĕçне хăйсем çине илсе лайăх туса пынинчен килчĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхозра чылай хĕрарăмсем 1942 çулта ĕçкунĕсен минимумне ирттерсе тултарчĕç. Т. Родионова 357 ĕçкунĕ, М. Иванова 300 ĕçкунĕ, Ф. Игнатьева 500 ĕçкунĕ турĕ. Вĕсен упăшкисем гитлерла захватчиксене хирĕç çапăçаççĕ. Колхозницăсем хăйсем колхозра стахановла ĕçлесе фронта пулăшса тăраççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленсе çитрĕ. Хĕрарăмсем, хĕрсем вăрлăх сортланă çĕрте лайăх ĕçлерĕç. Вăрлăхăн тасалăхĕшĕн, пахалăхĕшĕн тăрăшрĕç.

Çĕре çемçетес тĕлĕшпе те çине тăрса ĕçлерĕç. Уя пин лав ытла тислĕк кăларнă, 32 гектар çинче юр тытнă, 30 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 30 центнер кĕл пухнă.

М. Степанова.

Ют çĕршывсенче

БЕРЛИНА ТАПĂННИ ÇИНЧĔН ТĔПЛĔНРЕХ ПĔЛТЕРНИ

ЖЕНЕВА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство Трансоцеан çапла пĕлтерет: мартăн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Берлина вăйлăн тапăннă. Вĕсем Берлина чылай сиенленĕ. Хулан темиçе кварталĕнче нумай япала çĕмĕрĕлнĕ.

ТУНИС ФРОНТĔНЧЕ

ТРИПОЛИ, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Тунисра 1-мĕш армин войскисем нимĕçсем кăнтăралла куçса пырассине чарса лартнă. Тĕнĕл держависем хăйсен войскисене Сбейтлăран тата Гафсăран тинĕс хĕрринелле куçараççĕ.

США-ра ÇАР ХИСЕПĔ ÇИНЧЕН СӲТСЕ-ЯВНИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). 1943 çулта çар хисепне 8.200.000 çынна çитерме палăртнă программăна хирĕç Америка пичетĕнче çаплах статьясем çыраççĕ. Сăмахран, США президенчĕ пулса ĕçленĕ Гувер та ăна хирĕç каланă. Нумаях пулмасть пресс-конференцире вăл çапла каланă: вăрçă вăйĕсене çав тери пысăк хăвартлăхпа аталантарма кирлĕ мар, Германие татăклăн пырса çапасси 1943 çулта мар, 1944 çулта ăнăçлăрах пулĕ, тенĕ.

Гувера хирĕç паллă сенатор-демократ Теодор Грин тухса каланă. Вăл çакна палăртнă: 1917 çулта Гувер Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен Европăна экспедициллĕ пысăк çар ярассине хирĕç пулчĕ. Анчах Пĕрлешӳллĕ Штатсем 3,5 миллион çынлă экспедициллĕ çар туса хучĕç, вĕсенчен 2 миллионне Франциe ячĕç. Гувер каланине итленĕ пулсан,—тенĕ малалла сенатор Грин,—Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе союзниксем вăрçăра поражени тӳснĕ пулĕччĕç е вăрçă никам та çĕнтерейменнипе пĕтнĕ пулĕччĕ, тенĕ.

Хальхи вăхăтра, 1918 çулхи урока шута илмесĕрех, Гувер каллех çавăн пек канаш парать. Иртнĕ 25 çул хушшинче Гувер нимех те вĕренеймерĕ пулас.

Пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем умĕнче, тенĕ Грин, хĕвелтухăçĕнче Японие хирĕç хастарлăн кĕрешнипе пĕрлех Германие тĕппипех аркатса тăкас пысăк задача тăрать. Çак задачăна Германи çине çывăхри вăхăтрах сывлăшран хаяррăн, пĕр чарăнмасăр тапăнса пырса çĕр çинче тапăнассине хатĕрлемелле. Вăл вара Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене çĕмĕрсе тăкĕ, тенĕ.

РИББЕНТРОП ИТАЛИЕ КАЙНИ

ЖЕНЕВА, мартăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Италин çар ĕçĕсем тата шалти политикăллă ĕçсем япăхланнине пула Рима çак кунсенче Гитлерăн ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕ Риббентроп пырса çитнĕ. Унпа пĕрле Германин генеральнăй штабĕн оперативнăй отделĕн начальникĕн заместителĕ, генерал-лейтенант Варлимонт пынă.

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Риббентроп Рима кайни çинчен пĕлтерсе, Рейтер агентстви çапла калать: дипломатиллĕ ушкăнсем хушшинче Риббентроп Рима хăйсен халсăр союзникне—Италие хистеме кайнă, теççĕ». «Ивнинг стандарт» хаçат шучĕпе, Риббентроп Италирен 500 пин рабочие Германие яма, Германи аллине çĕнĕрен 15 дивизи тăратма, Вăтаçĕр тинĕсри вăрçă операцийĕсене вăйлатма ыйтнă. Италие тата Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсене пусарма татăклă мерăсем йышăнма хушнă.

Ытти çыракансем каланă тăрăх, Гитлер тотальнăй мобилизаци тенине хăйĕн пур союзникĕсем хушшинче те туса ирттересшĕн.

ГАНДИ ВЫÇĂ ПУРĂНМА ПĂРАХНĂ

ЛОНДОН, мартăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Ганди апатланмасăр выçă пурăнма пăрахнă. Вăл февралĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 3 эрне хушши выçă пурăннă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Хĕрлĕ Хĕрес обществин Чăваш Обкомĕ мартăн 9-мĕшĕнче 1-мĕш номерлĕ шкулта мартăн 8-мĕшĕ ячĕпе вечер туса ирттерет.

Кун йĕрки:

1. „Хĕрарăмсен пĕтĕм тĕнчери кунĕ тата хĕрарăмсене санитари оборонине хутшăнтарасси" çинчен доклад пулать.

Докладчик ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ Давтян юлташ.

2. Художествăллă пай.

Вечер каçхине 7 сехетре пуçланать.

Билетсене РОКК-ăн пуçламĕш организацийĕсенче илмелле.

„Утильсырье" артеле килте алсасем тата ача-пăча кĕпи-йĕмĕсем çĕлекен çынсем кирлĕ.

Ĕç илме çак адреспа пымалла: Пионерская ур., 17, „Утильсырье" артель.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99 ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 1254 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.